# Чăваш АССРĕнчи ĕç çынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсен суйлав итогĕсем

# çинчен пĕлтерни

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ĕç çынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсенчен Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинчи ĕç çынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсен суйлавĕнче сасăланин результачĕсем çинчен даннăйсем илчĕ.

Ĕç çынни депутачĕсен 22 район, республикăна пăхăнса тăракан 4 хула, района пăхăнса тăракан 3 хула, 316 ял тата 6 поселок Совечĕсене суйланă.

Суйлавра мĕн пур суйлавçăсенчен сасăлама çакăн чухлĕ хутшăннă: район Совечĕсене суйланă çĕрте 99,98 процент, республикăна пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 99,96 процент, района пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 99,96 процент, ял Совечĕсене суйланă çĕрте 99,98 процент, поселок Совечĕсене суйланă çĕрте 99,97 процент.

Суйлава хутшăннă суйлавçăсенчен коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн çакăн чухлĕ сасăланă: район Совечĕсене суйланă çĕрте 98,93 процент, республикăна пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 99,22 процент, района пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 98,66 процент, ял Совечĕсене суйланă çĕрте 98,45 процент, поселок Совечĕсене суйланă çĕрте 99,08 процент.

Суйлава хутшăннă суйлавçăсенчен депутата суйлама тăратнă кандидатсене хирĕç çакăн чухлĕ сасăланă: район Совечĕсене суйланă çĕрте 1,07 процент, республикăна пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 0,78 процент, района пăхăнса тăракан хула Совечĕсене суйланă çĕрте 1,34 процент, ял Совечĕсене суйланă çĕрте 1,55 процент тата поселок Совечĕсене суйланă çĕрте 0,92 процент.

«Чăваш АССРĕнчи ĕç çынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положенин» 89-мĕш статйи тăрăх 1 бюллетене тĕрĕс мар тесе йышăннă.

Çапла ĕнтĕ, мĕн пур суйлавçăсем тенĕ пекех, вĕсен питех те пĕчĕк пайне шута илмесен, суйлава хутшăннă, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăллă пулса сасăланă.

Чăваш АССРĕнчи вырăнти Советсене пурĕ 12.408 депутат суйланă. Депутатсем хушшинче 5.326 хĕрарăм, е 42,92 процент, КПСС членĕсемпе кандидачĕсем 5.311 çын, е 42,80 процент, производствăра ĕçлекен рабочисем 2.098 çын, е 16,91 процент тата колхозниксем 6.068 çын, е 48,90 процент.

Ял Советне суйламалли 8 суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăнă кандидатсем чи нумай сасă илейменнипе, вĕсем депутата суйланман. Çак округсенче «Чăваш АССРĕнчи ĕç çынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положенипе» килĕшӳллĕн çĕнĕ суйлав ирттерĕççĕ.

**ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ.**